# Çĕр-çĕр çăвăр сасси



**Пуш-çĕртме уйăхĕсем – çурасене сĕтпе çитĕнтерекен чĕр чуншăн та яваплă вăхăт.**

Кăçалхи нарăс-кăрлач уйăхĕсенче республикăра 2089 хир мулкачне шута илнĕ. Раççейĕн вăтам пайĕн регионĕсенче вăл çулталăкра 3 хутчен – нарăс-пуш, ака-çу тата çĕртме уйăхĕсенче – «чупать». 45-48 талăк пĕтĕ çӳрет. Çĕнĕ çултан пĕрремĕш хут ака-çу пуçламăшĕнче, иккĕмĕшĕнче çу вĕçĕнче-çĕртмере, виççĕмĕшĕнче çурла уйăхĕнче çăвăрлать. Çăмăлланасанах е хăш-пĕр чухне çăвăрличченех тепре «чупать». 1-9 çура çитĕнтерет. Çемье пысăк е пĕчĕк пуласси тĕрлĕ сăлтавран килет. Ĕрченĕ тапхăрта 1-2 хут çăвăрлакан мулкачсем йышлă сарăлнă районсенче йыш пысăкрах. Çуркунне пуçламăшĕнче çут тĕнчене 1-2-ĕн çеç килеççĕ. 3-4 çулти амасем çамрăкраххисемпе 6-7 çултисенчен ытларах çăвăрлаççĕ. Хӳтлĕхре çĕр чавса шăтăк тăваççĕ, унта йăва çавăраççĕ. Çăвăрласанах çурисем 80–150-шар г таяççĕ, кураççĕ. «Амăшĕ» талăкра – 1, тепĕр чухне 1-4 кунра пĕрре çеç ĕмĕртет. 5 талăкранах йăвара çаврăнкалама тытăнаççĕ. 2 эрнерен 300-400-шар г таяççĕ, 3-4 эрнерен йăваран тухаççĕ, тăрăшсах курăк çиеççĕ. Хăш-пĕр ама ют çурасене ĕмĕртет. Çапах та шурă мулкачсемпе танлаштарсан ун пек тĕслĕх сахалрах.

Ĕрченĕ ăстрăмра пакша 1-2 хут, пуш-утă уйăхĕсенче, çăвăрлать. Ами пĕтĕленме хатĕрленсе 3-6 аçана илĕртет. Лешсем пĕр-пĕринпе хирĕçеççĕ, сас кăларсах мăртăхаççĕ. Пĕри те тепри ама патĕнчен хăвалаcorrect са яма тăрăшать. Вăл çĕнтерӳçĕпе «чупать». Йывăç хăвăлра йăва – хăшĕ-пĕри харăсах 2-3 – тăвать. 35-38 талăкран çăвăрлать. Пĕрремĕш хут 3-10 çура, иккĕмĕшĕнче сахалрах тăвать. Çурисем курмаççĕ, çăмсăр, 8-шар г таяççĕ. 14 кунран тин çăмпа витĕнеççĕ. 30-32 талăкран хăвăлран тухаççĕ. «Амăшĕн» сĕчĕпе 40-50 кун тăранаççĕ. 8-10 эрнерен çемье саланать. 9-12 уйăхран çурасем пĕтĕленме хатĕр.

Ами пĕрремĕш çурисене çитĕнтерсен пĕр хушă канса илет. Тулăх апатланса мăнтăрланать. Вара тин иккĕмĕш хут пĕтĕленет. Пĕрремĕш хут çăвăрланăранпа 13 эрне иртсен иккĕмĕш çурасем кун çути кураççĕ. Юпа-чӳк уйăхĕсенче пакша кĕтĕвĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕ е 75-80% пĕрремĕш çулхи çурасенчен тăрать.

Тилĕ те кашкăр пекех çулталăкра пĕр хут çеç çăвăрлать. Вăл çуллен пĕтĕленесси апат çителĕклĕ пулнинчен нумай килет. Выçлăх çулсенче тилĕсенчен 60% таран ĕрчеймест. Йăва вырăнне хĕллех суйласа илет. Ăна çич ют йышăнасран хытă сыхлать. Харăсах 2-3 аçана ертет. Вĕсем уншăн вăрçăнаççĕ. Чи вăйли амапа мăшăрланать.

49-58 талăкран, ака вĕçĕнче – çу пуçламăшĕнче, выçлăх çул тĕттĕм кĕрен çăмлă 4-6 е тутă çул 12-13 çура çут тĕнчене килет. Кашнин хӳри вĕçĕ шурă. Икĕ эрнерен курма, илтме пуçлаççĕ, шăлĕ шăтать. Пăхма «ашшĕ» те, «амăшĕ» те хутшăнаççĕ. Çĕр «пӳрт» çывăхĕнчен кашкăр е этем иртнине сиссен çурисене урăх шăтăка куçараççĕ. Уйăх çурă сĕт кăна çиеççĕ. Майĕпен аш çиме тытăнаççĕ. 6 уйăхран йăваран тухаççĕ, «ашшĕ-амăшĕпе» сунара каяççĕ. Чăн та, малтан пĕр-пĕринпе тупăшса е аслисене чăрмантарса çемьене апатсăр хăвараççĕ. Кĕркунне хăйсем тĕллĕн пурăнма пуçлаççĕ. Çамрăк аçа «ашшĕ-амăшĕн» йăвинчен – 20-40, çăвăр ама 10-15 е тепĕр чухне 30 çухрăмра тĕпленет. Иккĕ тултарсан пĕтĕленме хатĕрленет.

Çăвăрлама хир мулкачĕ – ял çывăхĕнчи чăтлăха, тилĕ – çын çӳремен çырма-çатрана, пакша çывăхри вăрмана суйласа илнĕшĕн савăнмалла çеç. Вĕсене хăратасран асăрханмалла. Хутран-ситрен апатлантарсан лайăх.

**Геннадий ИСАКОВ,**
**биологи наукисен кандидачĕ**